26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус

1943
ДЕКАБРЬ
17
ЭРНЕКУН
248(6485) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Вăрлăх хатĕрлесси—паян тумалли ĕç

Тырпул тухăçлă пуласси—вăрлăхран нумай килет. «Мĕн акатăн — çавна пухса илетĕн»—тенĕ ĕлĕкех ваттисем. Вăрлăх хатĕрлес ĕçе халĕ, хĕл вăхăтĕнче, тимлĕн тумалла.

Пирĕн республикăри колхозсем кăçал начар мар тырă ÿстерсе илчĕç. Вăрлăхлăх акнă участоксенче те тырă аван пулчĕ. Сортлă участоксенчен пухса кĕнĕ пĕтĕм тырра ытти çĕре салатмалла мар, кашни колхозăн халех вăрлăх фончĕсене туса çитермелле.

Иртнĕ çулсенчи пекех, Вăрнар районĕнчи колхозсем халĕ çитес çураки валли вăрлăх хатĕрлес тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлеççĕ. Вĕсем тĕштырă культурисен вăрлăхне уйăрса хунă, вăрлăхсене тасатса триерсемпе сортланă. Вăрлăх фончĕсене тăвас ĕç çавăн пекех Сĕнтĕрвăрри, Сĕнтĕр, Шăхасан, Çĕрпÿ районĕсенчи колхозсенче ăнăçлăн пырать. Пăрçа йышши культурăсемсĕр пуçне, ку районсем вăрлăх фончĕсене хысса çитернĕ.

Декабрĕн 10-мĕшĕ тĕлне пирĕн республика вăрлăх хывмалли плана пĕтĕмĕшпе 76,7 процент, тĕштырă культурисен вăрлăхĕсем тăрăх уйрăммăн илсен—86,3 процент тултарчĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ республикăри колхозсенче хĕллехи агротехника ĕçĕсене туса ирттермелли план синчен йышăннă постановленире вăрлăх хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçleme колхозсенче ятарласа бригадăсемпе звеносем тума, вĕсене ертсе пыма правлени членĕсене, коммунистсемпе комсомолецсене уйăрса лартма хушнă. **Вăрлăх хывмалли, тасатса сортламалли, çавăн пекех тата вăрлăхсен шăтас пахалăхне тĕрĕслемелли мĕнпур ĕçсене январĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр туса пĕтермелле.**

Тÿрех калас пулать, чылай районсенчи колхозсенче çак ĕç сÿрĕк пырать. Вăрлăх хывас ĕçпе Шăмăршă, Çĕмĕрле, Чкаловски, Пăрачкав, Комсомольски районсен руководителĕсем сахал интересленеççĕ. Ку районсенче халĕ вăрлăх фончĕсене 50—60 процент чухлĕ çеç хывнă. Тырпулсене пухса кĕртес тĕлĕшпе малта пынă Шупашкар, Вăрмар, Елчĕк, Ишлей районĕсен руководителĕсем те халĕ вăрлăх хатĕрлес ĕçе сÿрĕк ертсе пыраççĕ. Ку районсенче вăрлăх фондне хывас ĕçе халех туса пĕтерме лайăх майсем пур, анчах ĕçе тивĕçлипе хакламанни, пикенмесĕр ĕçлени чарса тăрать.

Республикăра уйрăмах клевер, йĕтĕнпе кантăр, çĕрулми вăрлăхĕсене хывас ĕç кая юлчĕ. Вăрлăхлăх акса ÿстернĕ 10.710 гектар çинчи клевертан халĕ 5973 гектар çинчи клевера çеç çапса илнĕ, 4000 гектар çинчен çапса илнĕ клевер вăрлăхне çеç шĕкĕлчесе тасатнă.

Клевер вăрлăхне кăçал республика тулашĕнчен кÿрсе килесси çине шанса лармалла мар. Клевер вăрлăхĕ пирĕн хамăрăннах çитмелле. Çавăнпа та вăрлăхлăх клевера çапса шĕкĕлчес ĕçе халĕ уйрăмах пысăк тимлĕхпе туни кирлĕ.

Советски районри колхозсенче клевер кăçал начар мар пулчĕ. Анчах районри çĕрĕç пайĕнчи работниксемпе хăшпĕр колхозсен руководителĕсем вăрлăхлăх клевера çапса шĕкĕлчес ĕç сине ку таранччен [illegible]. Райсовет исполкомĕ [illegible] колхозсен [illegible]. Çавна пула ку районта клевер вăрлăхне 41 центнер çеç хатĕрленĕ. Çурхине акма клевер вăрлăхĕ пурĕ 180 центнер кирлĕ. [illegible] Клевер вăрлăхĕ 225 центнер кирлĕ пулсан, унта халĕ мĕн пурĕ те 20 центнер çеç хывнă. Первомайски (райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ Романов), Чкаловски (райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ Ахсянов) районсенчи колхозсенче клевер вăрлăхĕ пĕр центнер та хывман. Первомайски район йĕтĕнпе кантăр вăрлăхĕсене хывас тĕлĕшпе те сÿрĕк ĕçлет. 300 центнера яхăн йĕтĕн вăрри кирлĕ пулсан, халĕ мĕн пурĕ те 95 центнер çеç хывнă.

Çакăн пек сÿрĕк ĕçленине текех тÿсме çук. Вăрлăх хывас ĕç хăй тĕллĕн пулмасть, ку ĕçе куллен ертсе пыни кирлĕ.

Республикăри колхозсем, колхозниксемпе колхозницăсем государствăна тырă сутас, сутнă тырра хатĕрлев пункчĕсене турттарас ĕçсене патриотла пысăк çĕкленÿпе тăваççĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем фронта пулăшас тесе çине тăрса ĕçлеççĕ. Партипе совет тата комсомол организацийĕсен чи кирлĕ задачи—колхоз хресченĕсен активлăхне çуракине хатĕрленес ĕçсемпе çыхăнтарса пырасси пулса тăрать.

Вăрлăх тасатса сортлас ĕçсенче ялсенчи комсомолецсемпе çамрăксен хăйсен пример кăтартса ĕçлемелле, çак ĕçе пуçарса пымалла. Вăрнар районĕнчи колхозсенчи çамрăксем вăрлăх хатĕрлес ĕçе хăйсем çине илнĕ. Бригадăсемпе звеносене пĕрлешсе ĕçлесе, вĕсем вăрлăх сортланă çĕрте икшер-виçшер норма тултараççĕ. Республикăри мĕнпур комсомолецсемпе çамрăксен Вăрнар комсомолецĕсем пек ĕçлес пулать.

Хĕл—кану вăхăчĕ мар. Тухăçлă тырпул ÿстерессишĕн хĕллех тăрăшса ĕçлени кирлĕ, хатĕрленÿ ĕçĕсене тимлĕн тумалла. Анчах чылай районсенче çуракине хатĕрленес ĕç сÿрĕк пырать. Тырă сортламалли машинăсемпе, триерсемпе пур çĕрте те туллин усă курма тытăнман-ха. Уйрăм районсенчи çĕрĕç пайĕсем триерсемпе мĕн чухлĕ тырă сортламалли маршрута та туман, хăшпĕр колхозсенче машинăсемпе усă курмасăр тăраççĕ. Кувакино районĕнчи колхозсенче, тĕслĕхрен, тырă тасатмалли машинăсем 160, вăл шутра 67 триер. Анчах та колхозсенче тырă тасатса сортлас ĕçсене тивĕçлипе организацилемен. Райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ Кисельков ку ĕç колхозсенче хăй тĕллĕн пулса пырасси çине шанать, вăрлăх хатĕрлес ĕçе ертсе пымасть. Çавна пула Кувакино районĕнчи колхозсем халĕ вăрлăх хывмалли плана пурĕ те 68,8 процент çеç тултарнă, вăрлăхлăх уйăрса хунă тыррăн 36,2 процентне çеç триерсемпе сортланă.

Хĕрлĕ Чутай, Советски, Шупашкар, Тăвай районĕсенче вăрлăх валли уйăрса хунă тырра триерсемпе 6—9 процент çеç сортланă. Канаш районĕнче вăрлăха триерсемпе сортлама пачах та тытăнман. Тырă сортламалли 136 машинăран кунта пĕрикне те тырăн ĕçлемеççĕ.

Вăрлăх хатĕрлес ĕçре вăрлăх пахалăхĕшĕн кĕрешесси пысăк вырăн йышăнмалла. Вăрлăхсен шăтас пахалăхне тĕрĕслес ĕçе пысăк ответлăхпа тумалла. Тĕрĕслÿ лабораторийĕсен анализĕ тăрăх, сортланă вăрлăхсен чылай пысăк пайĕ халĕ тасалăх енчен кондицие лармасси курăнать. Çакă вăл вăрлăха тасатса сортлас ĕçсене хăшпĕр колхозсенче çиелтен, ячĕшĕн çеç тунине кăтартать. Ишлей [illegible] 4 324 центнер тырра лабораторипе тĕрĕсленĕ, çав шутран 2 718 центнерĕ [illegible] Октябрьски, Сĕнтĕрвăрри районĕсенчи колхозсенче те [illegible].

Вăрлăх хатĕрлес ĕçри çитменлĕхсене халех пĕтермелле. Çĕнĕ çулччен республикăри кашни колхозра çитес çулхи акма планне ăнăçлăн пурнăçлама кирлĕ пур вăрлăха та тасатса [illegible] хатĕрлесе хумалла.

Югославири Фашизма хирĕçле Вече— Мĕнпур славянсен комитетне

Мĕнпур славянсен комитечĕ çакăн пек телеграмма илнĕ:

«Югославири Фашизма хирĕçле Вечен иккĕмĕш пухăвне пухăннă делегатсем Мĕнпур славянсен комитетне тăванла салам яраççĕ. [illegible] тăшмана—нимĕçсен фашизма империалисчĕсене хирĕç пыракан кĕрешÿре пирĕн çĕршыв [illegible] славянсен [illegible]. Пирĕн тăван çĕршыва пулăшнăшăн эпир Мĕнпур славянсен комитетне тав тăватпăр. Пирĕн тăван çĕршыв [illegible] хăйсен пурнăçне шеллемесĕр [illegible] Çĕнтересси [illegible] федерацилле Югославие [illegible] эпир малашне те [illegible] тăратпăр.

Нимĕç фашизмне хирĕç [illegible] славянсен [illegible] сывă пултăр!

Сывă пултăр Мĕнпур славянсен комитечĕ!

Югославири Фашизма хирĕçле Вечен Президиумĕ». (ТАСС).

Совет Информаци Бюровĕнчен

ДЕКАБРĔН 14-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

УКРАИНĂРИ 2-мĕш фронтăн çарсем, наступлени туса пырса, декабрĕн 14-мĕшĕнче, вăйлă çапăçнă хыççăн, ЧЕРКАССЫ хулине тытса илнĕ; çав хула вăл нимĕçсен ДНЕПР шывĕн сылтăм енчи оборонин паха узелĕ пулса тăнă.

КРЕМЕНЧУГ хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем наступлени туса пынă, ШАБЕЛЬНИКИ, БОРОВИЦА, ПОГОРЕЛЬЦЫ, МОРДВА, РОСОШЕНЦЫ ятлă ялсене тытса илнĕ.

КИРОВОГРАД енче пирĕн çарсем тăшманпа çапăçнă, темиçе ял тытса илнĕ.

МАЛИН хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен контратакисене сире-сире ярса, тăшмана çынсемпе техникăна тĕлĕшĕнчен пысăк çухату тÿстернĕ. МАЛИН хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем РАДОМЫШЛЬ хулине хăварнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă тата артиллерипе миномётсенчен персе тăнă.

Декабрĕн 13-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 24 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 14 самолетне персе ÿкернĕ.

ДЕКАБРĔН 15-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Декабрĕн 15-мĕшĕнче пирĕн çарсем ЧЕРКАССЫ хулинчен кăнтăртарахра тата кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре, ăнăçлă наступлени туса пырса, ЗМОГАЙЛОВКА, КРАСНАЯ СЛОБОДА, ЛЕСКИ, ТАЛДЫКИ, ХУДЯКИ, ЛОМОВАТОЕ, САГУНОВКА, ТОПИЛОВКА, МУДРОВКА, СТЕПАНКИ, БОЛЬШОЙ БУЗУКОВ, НЕЧАЕВКА, ДУМАНЦЫ, ХУДОЛЕЕВКА, ТРУШЕВЦЫ, СУББОТОВ, ЧЕМЕРЕВКА ятлă пысăк ялсене тата БЕЛОЗЕРЬЕ ятлă чугун çул станцине тытса илнĕ.

КИРОВОГРАД хули енче пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтере-çĕнтере тата унăн пехотипе танкĕсен контратакисене сире-сире ярса, малалла тапăнса пынă, хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă.

МАЛИН хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем тăшмана темиçе ялтан çапса кăларнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă тата тăшмана хирĕç артиллерипе миномётсенчен персе тăнă.

Декабрĕн 14-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 108 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 50 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

Черкассы хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем, наступлени туса пырса, темиçе ял тытса илнĕ те Кременчуг хулинчен хĕвеланăçнерехре кĕрешекен хамăр çарсемпе пĕрлешнĕ. Çапла ĕнтĕ, Днепр шывĕн сылтăм енне, Кременчуг хулинчен пуçласа Черкассы хули патне çитиччченех, нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен тасатнă. Каялла чакакан тăшмана пысăк çухатусем кÿнĕ. Пĕр ял районĕнче кăна совет боецĕсем 600 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă, 2 артиллери батарейине, 28 пулемет тата тĕрлĕ çар пурлăхĕ турттарса пыракан обоза тытса илнĕ. Черкассы хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çăмăллăн куçакан отрядсем, пĕчĕк ушкăнсемпе пырса, нимĕçсен тылне тухнă та Белозерье ятлă чугун çул станци патне çитнĕ, унта тăшмана çав тери хăвăрттăн пырса çапнă. Белозерье станцинче апат-çимĕçсен пысăк склачĕсене тытса илнĕ.

Пирĕн летчиксем кун каçиччен сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 38 самолетне персе ÿкернĕ. Уйрăмах старши лейтенант Скляров чапа тухнă, кун каçиччен вăл нимĕçсен 6 самолетне персе ÿкернĕ, çав шутран тăваттăшĕ—«Юнкерс—87» йышши бомбардировщиксем, иккĕшĕ—«Фокке-Вульф—190» йышши истребительсем.

* * *

Кировоград хули енче пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе-çĕнтере, наступлени туса пынă. Пĕр соединени чаçĕсем, хаяррăн çапăçса, гитлеровецсене пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă, тăшманăн 14 танкне персе çĕмĕрнĕ. Трофейăсем тытса илнĕ, вĕсен шутĕнче—пĕр йывăр танк тата 8 тупă. Пĕр чугун çул станци районĕнче нимĕçсен бронепоездне çĕмĕрсе тăкнă. Тепĕр участокра нимĕçсем хăйсен пехотипе танкĕсен пысăк вăйĕсене пухнă та контратака тунă. Совет боецĕсем тăшман контратакине сирсе янă, нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 800 çынна çити пĕтерсе тăкнă. Çав çапăçура тăшманăн 32 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă.

* * *

Малин хулинчен кăнтăртарахра кăнтăрла иртсен тăшман, артиллери вăйлăн персе тăнă хыççăн, наступлени пуçласа янă. Икĕ полк пехота тата 100 танк ытла темиçе хутчен те пирĕн оборона линине татма хăтланнă, анчах та тăшмана кашнинчех малтанхи позицийĕ патне ывăта-ывăта янă. Пуринчен те хаяртарах çапăçу Квашник подполковник командир пулса ертсе пыракан артиллери чаçĕ хÿтĕлекен участокра пулса иртнĕ. Совет артиллерисчĕсем кашни хутĕнчех тăшмана хăйсем патне çывăхах пыма панă та, усă позицисенчен персе, нимĕç танкĕсене çĕмĕре-çĕмĕре тăкнă. Икĕ сехет хушши пынă çапăçура нимĕçсен «Тигр» йышши 12 танкне, 16 вăтам танкне, 5 бронемашинине тата пехота лартнă темиçе вунă автомашинине пĕтерсе тăкнă. Тăшмана çапла пысăк çухатусем кÿнĕ хыççăн пирĕн çарсем нимĕçсене хирĕç пырса çапнă та вĕсене темиçе ялтан хĕссе кăларнă.

Совет летчикĕсем тăшманăн çапăçури йĕркисене пыра-пыра çĕмĕрнĕ, нимĕçсен 20 танкĕпе хăй тĕллĕн çÿрекен туппине ытла, 70 автомашинине тата бензин тултарнă 2 цистернине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Крымра кĕрешекен партизансен ушкăнĕ тăшманăн малти позицисем патне боеприпассем турттарса пыракан транспортне тапăннă. Партизансем снарядсем турттарса пыракан 4 автомашинăна сирпĕнтерсе янă тата нимĕçсемпе румынсен 20 салтакне вĕлерсе тăкнă. Крымри партизансен тепĕр ушкăнĕ тăшманăн шоссе çулне сыхлакан икĕ заставине тапăннă та 40 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă.

* * *

Нимĕçсен 14-мĕш моторизованнăй дивизийĕнчи 11-мĕш полкран Хĕрлĕ Çар енне куçнă салтак Рудольф П. çапла каласа кăтартнă: «Эпĕ 371-мĕш пехотнăй дивизири 670-мĕш пехотнăй полкра тăраттăм. Ку дивизи Францире Ла-Манш хĕрринче тăратчĕ. Кĕркунне полкри тĕрлĕ подразделенисенчен маршевăй батальон турĕç. Эпĕ те çав батальона лекрĕм. Пире Российăна яма хатĕрленни çинчен пĕлсен, салтаксем пурте хуйăха ÿкрĕç: 150 çын: эпир сывмар, çавăнпа хĕвелтухăçне кайма пултараймастпăр, тесе каларĕç. Вĕсене врач пăхкаласа тухрĕ, пурне те: фронтра стройра тăма юрăхлă, тесе каларĕ. Салтаксем, хăйсен ÿт-пÿ кăлтăкĕсем çине тата вĕсем чирли çине кăтартса, тепĕр хут пăхса тухма врачсен комиссине яма ыйтрĕç. Анчах та капла хăтланнинчен нимĕн те тухмарĕ. Вĕсене çапла ăнлантарса пачĕç: маршевăй батальона сывлăх енчен чи вăйлă салтаксене суйласа илнĕ, терĕç. Хĕвелтухăçнелле килнĕ чухне çул çинче батальонран 6 полякпа 4 нимĕç тарчĕç. Фронтра мана 11-мĕш полка ячĕç. Юлашки вăхăт хушшинче полка 8 хутчен çынсем хушса пачĕç. Анчах та, пысăк çухатусем тÿснĕ пирки, полкра халь çынсем малтанхи пекех нумай çитмеççĕ».

* * *

Волхов фронтĕнчи участоксенчен пĕринче пирĕн подразделенисем тăшман позицийĕсене тытса илнĕ. Иванов майор командир пулса ертсе пыракан чаçри боецсем пĕр землянка тупнă, çав землянкăра фашистла пуçкасакансем тыткăна лекнĕ красноармеецсене асаплантарнă. Васкаса тармалла пулнă пирки, гитлеровецсем хăйсен ирсĕр ĕçĕсен йĕрĕсене пытарма ĕлкĕреймен. Çав землянкăра совет боецĕн виллине тупнă. Ăна нимĕçсем тискеррĕн асаплантарса вĕлернĕ. Ăна юпа çумне пралукпа çыхса лартнă. Çав виллене пăхса тухнă комисси çакна палăртнă: красноармеецăн алă тупанĕсене çивĕч хĕçпăшалпа касса пĕтернĕ, сулахай урин тупанне касса татнă. Пĕтĕм ÿтне çĕçĕпе чиксе пĕтернĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Чăваш АССР Совнаркомĕ, республикăри вырăнти промышленность предприятийĕсен, промыслапа инвалидсен кооперацийĕсен артелĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1943 çулхи ноябрь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, çапла йышăннă:

ВЫРĂНТИ ПРОМЫШЛЕННОСТЬ ПРЕДПРИЯТИЙĔСЕМ ЕНĔПЕ

Ишлей райпромкомбинатне (управляющийĕ Хорасев юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ Петров юлташ), ноябрьти плана пĕтĕм продукци кăларас енĕпе 120,6 процент, куллен кирлĕ таварсем кăларас енĕпе 134,1 процент тултарса октябрь уйăхĕнчинчен 19 процент чухлĕ продукци ытларах туса кăларнăскере, **Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне пама** тата уйрăмах палăрнă работниксене премилеме 15.000 тенкĕ укçа награда пама йышăннă.

Канаш горпромкомбинатне пĕрремĕш преми—10.000 тенкĕ, Кувакино райпромкомбинатне иккĕмĕш преми—5.000 тенкĕ памалла тунă. Элĕк, Пăрачкав, Вăрмар, Чкаловски, Çĕрпÿ тата Шăхасан райпромкомбиначĕсем те ноябрь уйăхĕнче лайăх ĕçленине палăртнă.

Совнарком кунпа пĕрлех Калинино, Хĕрлĕ Чутай, Сĕнтĕрвăрри, Первомайски, Советски, Шăмăршă, Етĕрне райпромкомбиначĕсем тата Улатăр горпромкомбиначĕ питех те начар ĕçленине палăртнă

ПРОМЫСЛА КООПЕРАЦИ АРТЕЛĔСЕМ ЕНĔПЕ

Октябрьски районри Каранъялĕнчи «Труд» артеле (правлени председателĕ Мокеев юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ Херсонов юлташ), ноябрьти плана пĕтĕм продукци кăларас енĕпе 162,6 процент, куллен кирлĕ таварсем кăларас енĕпе 165,7 процент тултарса, планран ирттерсе 92,7 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларнăскере, çавăн пекех пур ассортиментсем тăрăх та плана ирттерсе тултарнăскере, **Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне пама** тата уйрăмах палăрнă работниксене премилеме 15.000 тенкĕ укçа награда пама йышăннă.

Сĕнтĕрвăрринчи «Лесоруб» артеле—10.000 тенкĕ, Пысăк Шахчурари артеле—5.000 тенкĕ памалла тунă.

Совнарком çакăнпа пĕрлех Шупашкарти «Заводской», Улатăрти «14 лет Октября», Элĕкри «Мотор», Йĕпреçри «Кооплеспром» тата ытти артельсем те лайăх ĕçленине палăртнă.

Кунпа пĕрлех промкооперацин Элĕк, Вăрнар, Ишлей, Кувакино, Калинино, Сĕнтĕрвăрри, Пăрачкав районĕсенчи артелĕсем начар ĕçленине палăртнă. Унти райсовет исполкомĕсен председателĕсене, çавăн пекех Чăвашпромсоюз, Чăвашдревпромсоюз, швейпромсоюз тата тарпромсоюз президиумĕсен председателĕсене Титов, Андреев, Писарева, Гордеев юлташсене хăйсен артелĕсен ĕçне тĕпрен лайăхлатас тĕлĕшпе васкавлă мерăсем йышăнма, декабрь уйăхĕнчи плана пĕр пăркаланмасăр ăнăçлăн пурнăçа кĕртме хушнă.

ИНВАЛИДСЕН КООПЕРАЦИЙĔН АРТЕЛĔСЕМ ЕНĔПЕ

Улатăрти «Союз инвалидов» артеле (правлени председателĕ Сивогривов юлташ, горсовет исполкомĕн председателĕ Вельчинский юлташ), **Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне пама,** ĕçре уйрăмах палăрнă работниксене премилеме 15.000 тенкĕ укçа награда пама йышăннă.

Канашри «Красный воин» артеле—10.000 тенкĕ памалла тунă.

Çавăнпа пĕрлех çакна та палăртнă: инвалидсен кооперацийĕн чылай артелĕсем ноябрь уйăхĕнче çителĕксĕр ĕçленĕ, çавна пула вара пĕтĕм продукци туса кăлармалли тата продукцие уйрăм ассортиментсем тăрăх туса кăлармалли плана пурнăçа кĕртеймен.

Совнарком Чăвашкоопинсоюз президиумĕн председательне Шадрин юлташа тата Вăрнар, Йĕпреç, Улатăр, Пăрачкав, Çĕрпÿ, Элĕк, Шупашкар, Первомайски, Сĕнтĕр, Советски, Канаш, Шăхасан райсовечĕсен исполкомĕсен председателĕсене юлса пыракан артельсене халех пулăшма, çапла вара декабрьти плана пурнăçа кĕртмелли мерăсене йышăнма хушнă.

Çĕнĕ çул умĕн

Çĕнĕ çитĕнÿсемпе кĕтсе илеççĕ

Шупашкарти индпошив мастерскойĕн коллективĕ ноябрь уйăхĕнчи производство планне 108 процент тултарнă. Декабрь уйăхĕн малтанхи кунĕсенчи итогĕсем ĕç татах та лайăхланнине кăтартаççĕ. Иванушкина, Антипова, Засорина, Сапожникова, Киселева юлташсем куллен икшер норма ытла тултараççĕ. Полякова, Андреева, Игнатьева юлташсем те ĕç нормине 150—170 процент тултарса пыраççĕ.

Мастерской коллективĕ çĕнĕ çула ĕçри çĕнĕ çитĕнÿсемпе кĕтсе илессишĕн кĕрешет

А. КРАСНОВ.

Планран ирттерсе—66 пин тенкĕлĕх продукци

Шупашкарти горпромкомбинат коллективĕ (управляющийĕ С. Григорьев юлташ) 1943-мĕш çулхи производство программине ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 109,4 процент пурнăçланă. Унтанпа вăл планран ирттерсе 66 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларнă. Уйрăм цехсене илсен, атăпушмак çĕлекен цех çулталăкри плана 187 процент, тимĕр-тăмăртан тĕрлĕ япаласем туса кăларакан цех 191 процент, çĕвĕ çĕлекен цех 111 процент тултарнă.

Кунта ĕçлекен рабочисемпе работницăсем союзлă виçĕ аслă державăн руководителĕсен Тегеранри конференцийĕн историллĕ решенийĕсене сÿтсе-явнă хыççăн çĕнĕ обязательствăсем илчĕç. Вĕсем çĕнĕ çулччен 1944-мĕш çулхи производство программине 20 процента яхăн пурнăçлама пулчĕç. А. Васильев, А. Алексеев, Галкин стахановецсем декабрь уйăхĕнчи задание 250 процент тултарма пулчĕç. Çĕвĕ çĕлекен цехри стахановецсем Золобовпа Афанасьева юлташсем те кулленхи задание икĕ хут ирттерсе тултараççĕ.

В. М. Молотов юлташ Эд. Бенеш господинпа калаçни

Декабрĕн 14-мĕшĕнче Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ Чехословаки Республикин Президентне Эд. Бенеш господина йышăннă. Калаçура çĕрте Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ А. Е. Корнейчук юлташ, Совет Союзĕн Чехословаки Республикин Правительстви çумĕнчи Посолĕ В. З. Лебедев юлташ, Чехословаки Республикин Совет Союзĕнчи Посолĕ Зд. Фирлингер господин тата Президент Кабинечĕн Начальникĕ Я. Смутный господин пулнă.

Чехословаки Республикин Президенчĕ Эд. Бенеш господин нимĕçсенчен тытса илнĕ хĕçпăшалсен выставкине пырса курни

Чехословаки Республикин Президенчĕ доктор Эд. Бенеш декабрĕн 13-мĕшĕнче, Мускавра, нимĕçсенчен 1941—1943-мĕш çулсенче тытса илнĕ хĕçпăшалсен выставкине пырса курнă.

Эд. Бенеш господинпа пĕрле выставкăна çаксем пынă: Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ А. Е. Корнейчук юлташ, Чехословаки Республикин Совет Союзĕнчи Посолĕ Зд. Фирлингер господин, Эд. Бенеш господинăн Кабинечĕн Начальникĕ Я. Смутный господин, Чехословакин Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министерствин Информаци Службин Начальникĕ Я. Краус господин, Чехословакин Государство Совечĕн Членĕ Б. Врбенский господин, Чехословаки Çарĕн генерал-лейтенанчĕ А. Нижборский, Чехословакин Совет Союзĕнчи чаçĕсен Командующийĕ генерал Я. Кратохвил, НКИД-ăн Протокол Отделĕн Заведующийĕ Г. И. Фомин юлташ, Чехословакин Совет Союзĕнчи Çар Миссийĕн Начальникĕ полковник Г. Пика тата ыттисем те.

Хăнасем выставкăн уçă площадкинчи тата павильонĕсенчи экспоначĕсене те пăхса тухнă. Хăнасене выставка начальникĕ генерал-лейтенант Р. Хмельницкий ăнлантарса çÿренĕ. Выставкăна икĕ сехет хушши ытла пăхса çÿренĕ. (ТАСС).

Государствăна—тырăпа çĕрулми

ГОСУДАРСТВĂНА СУТНĂ ТЫРРА 25 РАЙОН ХАТĔРЛЕВ ПУНКЧĔСЕНЕ ТУРТТАРСА ПĔТЕРНĔ

Государствăна сутнă тырра хатĕрлев пункчĕсемпе сельпосен склачĕсене турттарас ĕçе район хыççăн район вĕçлесе пырать. Декабрĕн 16-мĕшĕ тĕлне Советски (райком секретарĕ Никитин, райсовет исполкомĕн председателĕ Малинин), Елчĕк (райком секретарĕ Волков, райсовет исполкомĕн председателĕ Осипов), Шăмăршă (райком секретарĕ Вислобоков, райсовет исполкомĕн председателĕ Михеев), Вăрмар (райком секретарĕ Смирнов, райсовет исполкомĕн председателĕ Виктимиров), Чкаловски (райком секретарĕ Никитин, райсовет исполкомĕн председателĕ Самсонов), Комсомольски (райком секретарĕ Георгиев, райсовет исполкомĕн председателĕ Падюков) тата Элĕк (райком секретарĕ Федотов, райсовет исполкомĕн председателĕ Филимонов) районсем государствăна сутнă тырра хатĕрлев пункчĕсемпе сельпо склачĕсене турттарас ĕçе вĕçленĕ.

Çĕрулми сутас ĕçе большевикла организацилер

Халăхсен çулпуçĕ Сталин юлташ совет ĕççыннийĕсене çĕнĕрен ытларах вăй хурса ĕçлеме чĕнни çине колхоз хресченĕсем патриотла ĕçсемпе ответлеççĕ. Нумай колхозсем тата колхозниксемпе колхозницăсем хăйсен хуçалăхĕсенче перекетленĕ тырра государствăна сутса мухтава тивĕçлĕ ĕç турĕç. Чылай районсенчи колхозсем ĕнтĕ государствăна сутнă тырра хатĕрлев пункчĕсене турттарса пĕтерчĕç.

Государствăна тырă сутнипе пĕрлех колхозниксемпе колхозницăсем кооператив урлă çĕрулми сутма тытăнчĕç. Сĕнтĕр районĕнчи «Аврора» колхоз членĕсем 480 пăт, Каганович ячĕпе тăракан колхоз членĕсем 360 пăт çĕрулми сутма йышăннă. Сĕнтĕр районĕнчи колхозсем государствăна пурĕ 480 тонна çĕрулми сутаççĕ. Элĕк, Октябрьски, Пăрачкав тата Елчĕк районĕсенче те государствăна çĕрулми сутас ĕçе нумай колхозниксемпе колхозницăсем активлăн хутшăнаççĕ. Çапла, Элĕк районĕнче пурĕ 256 тонна сутнă пулсан, вăл хисепрен колхозниксем сутнă çĕрулми 213 тонна ытла шутланать. Октябрьски районри колхозниксем 178 тонна çĕрулми сутнă.

Партипе совет организацийĕсен тата ялти пĕтĕм общественноçăн тивĕçĕ—государствăна кооператив урлă çĕрулми сутас ĕçе большевикла организацилесси пулать. Вĕсем государствăна тырă сутнă тапхăрта колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе йĕркелес тĕлĕшпе пысăк тимлĕхпе ĕçлерĕç тата сахал мар опыт туянчĕç. Халĕ ĕнтĕ çав пуян опытпа усă курса, çĕрулми сутас ĕçе йĕркеллĕ ирттермелле. Анчах та хăшпĕр районсенчи партипе совет организацийĕсем çак ответлă та кирлĕ ĕçе пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе сӳрĕк ĕçлеççĕ-ха. Шăхасан, Кувакино, Советски, Красноармейски тата ытти хăшпĕр районсенче паян куна çитиччен те çĕрулми сутас ĕçе организацилемен. Вăл районсенче государствăна тырă сутас тĕлĕшпе тунă çитĕнӳсемпе лăпланса ларма пăхаççĕ.

Государствăна çĕрулми сутас ответлă ĕçе пирĕн большевикла организацилемелле. Кăçал колхозсем тата колхозниксемпе колхозницăсем тухăçлă çĕрулми пухса илчĕç. Ăна перекетлĕн тыткаласан, вăрлăхлăх та, çимелĕх те, государствăна сутмалăх та çитет. Массăллă-ăнлантару ĕçне анлăн сарса пырса, кашни колхознике çĕрулми сутас ĕçе явăçтарас пулать.

Çĕрулми сутассине организацилениpe пĕрлех ăна складсене турттарасси тата пăхса усрасси çине тимлĕн çаварăнса пăхмалла. Çĕрулми сивĕпе пăсăлма пултарать. Апла пулсан ăна турттарнă чухне шăнасран сыхламалла, складсенче çĕресрен, шăнса пăсăласран упрамалла.

Колхозниксен тава тивĕçлĕ ĕçĕ

ВĂРМАР, декабрĕн 16-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсемпе темиçе пин колхозник государствăна 144 пин пăт тырă сутса, ăна пĕтĕмпех хатĕрлев пунктне леçсе парĕç. Тырă сутас ĕçре уйрăмах «Большевик», «Арапуç», «Дружба» тата Молотов ячĕпе тăракан колхозсем паха тĕслĕхсем кăтартрĕç.

Государствăна тырă сутас ĕçе организациленĕ çĕрте коммунистсемпе комсомолецсем, пуçламăш парторганизацисен секретарĕсем тăрăшса ĕçлерĕç. Вĕсем колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе анлăн туса пычĕç, ку ĕçре хăйсем малта пычĕç. Çапла «Красные Мураты» колхозри пуçламăш парторганизаци секретарĕ Ларионов юлташ государствăна хăй 30 пăт, Кĕлкешри пуçламăш парторганизаци секретарĕ Мясников 30 пăт сутнă. Кун пек тĕслĕхсене нумай илсе кăтартма пулать.

Колхозсем халĕ государствăна çĕрулми сутма тытăнчĕç.

А. СМИРНОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Сельпо склачĕсене йышăннă тырра хатĕрлев пунктне турттараççĕ

ЕЛЧĔК, декабрĕн 16-мĕшĕ. (Телефонпа). Хĕрлĕ Çара пулăшасси — пирĕн кулленхи тивĕçлĕх. Çакăн пек лозунгпа пулса пырать районри колхозсенче государствăна тырă сутас ĕç.

Колхозсем тата колхозниксемпе колхозницăсем хăйсен перекетленĕ тыррине государствăна 158.500 пăт сутса, ăна пĕтĕмпех хатĕрлев пункчĕсемпе сельпосен склачĕсене турттарса пĕтерчĕç. Халĕ нумай колхозсем сельпосен складĕнчи тырра хатĕрлев пунктне леçеççĕ. «Хунав», Крупская, Молотов ячĕпе тăракан тата ытти чылай колхозсем çак ĕçе туса пĕтерчĕç.

Районри нумай колхозсем государствăна çĕрулми сутма тытăнчĕç. Ку таранччен 220 тонна ытла сутнă. Çĕрулмине те çийĕнчех турттарса пĕтерессишĕн çине тăрса ĕçлетпĕр.

С. МАКАРОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Колхозниксем государствăна çĕрулми сутаççĕ

СĔНТĔР, декабрĕн 16-мĕшĕ. (Телефонпа). Шашкар ялсоветне кĕрекен колхозсем государствăна сутнă тырра хатĕрлев пункчĕсене декабрĕн 5-мĕшĕнче леçсе пĕтерчĕç. Çакăн хыççăн вĕсем кӳршĕри колхозсене тырă турттарма пулăшнă. Халĕ колхозниксемпе колхозницăсем государствăна кооператив урлă çĕрулми сутма тытăнчĕç. «Аврора» колхоз членĕсем 480 пăт, «Хĕрлĕ маяк» колхоз членĕсем 200 пăт, Каганович ячĕпе тăракан колхоз членĕсем 360 пăт сутнă. Сутнă çĕрулмие вĕсем çийĕнчех складсене турттарма тытăнчĕç.

Районри колхозсем ку таранччен пурĕ 480 тонна ытла çĕрулми сутнă.

М. КАРПОВ.

Промышленность таварĕсене тĕрĕс сутмалла

Государствăна тырăпа çĕрулми сутнă колхозниксене промышленность таварĕсем сутас йĕркене Красноармейски районри суту-илӳ организацисем пăсаççĕ, таварсене кирлĕ-кирлĕ мар çĕре салатаççĕ. Сельпо председателĕ Петров райцентрти служащисене тата хăйĕн çывăх юлташĕсене — Терентьев, Горшков, Борисов, Иванов тата ыттисене те магазина килнĕ таварсене 707 тенкĕлĕх салатса панă.

Кунсăр пуçне сельпо председателĕн заместителĕ Афанасьева Шупашкартан Красноармейскине çитиччен çул çинчех 706 тенкĕлĕх промтовар сутса пĕтернĕ. Кун пек фактсем татах та пур. Кушарти Буденный ячĕпе тăракан колхозра колхозниксем валли кӳрсе килнĕ тавара колхоз руководителĕсем хăйсем хушшинче салатнă. Çавна пула государствăна тырă сутнă колхозниксем тавар илеймесĕр юлнă.

Государствăна тырă сутнă колхозниксене сутмалли промышленность таварĕсене урăх çĕре салатмалла мар. Суту-илӳ организацийĕсен вăл таварсене пурне те государствăна тырă сутнă колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче тĕрĕс сутмалла.

С. ШАДИН.
(Хамăр корр.).

Вăрман хатĕрлевĕ

Республикăри районсем чугун çул валли вутă хатĕрлемелли 1943-мĕш çулхи иккĕмĕш çур çулти плана декабрĕн 15-мĕшĕ тĕлне мĕнле тултарнине кăтартакан

СВОДКА

Районсем	Плана тултарни (процентпа): Турттарас çипе	Плана тултарни (процентпа): Хатĕрлес çипе	Мĕнле вырăн тăрать: Турттарас çипе	Мĕнле вырăн тăрать: Хатĕрлес çипе
Йĕпреç	112,9	86,0	1	5
Канаш	105,8	88,6	2	4
Сĕнтĕрвăрри	104,8	102,2	3	1
Шăхасан	97,8	91,2	4	2
Ишлей	95,4	61,2	5	15
Вăрнар	87,6	73,2	6	10
Первомайски	86,4	89,5	7	3
Улатăр	83,9	82,7	8	7
Вăрмар	81,2	83,6	9	6
Елчĕк	80,4	56,5	10	18
Шупашкар	79,8	64,7	11	12
Пăрачкав	79,4	61,3	12	14
Сĕнтĕр	76,3	51,5	13	21
Çĕрпӳ	76,2	78,9	14	8
Калинино	74,9	73,0	15	11
Комсомольски	74,2	50,7	16	23
Етĕрне	74,1	58,1	17	16
Куславкка	71,7	55,6	18	19
Советски	70,0	51,1	19	22
Элĕк	66,3	52,9	20	20
Çĕмĕрле	63,8	50,6	21	24
Красноармейски	56,1	57,3	22	17
Октябрьски	54,2	42,1	23	27
Шăмăршă	53,1	64,5	24	13
Тăвай	46,9	76,6	25	9
Чкаловски	46,4	42,8	26	26
Хĕрлĕ Чутай	42,1	43,2	27	25
Кувакино	13,1	35,9	28	28

Етĕрнепе Красноармейски районсем чугун çул валли вутă хатĕрлес тĕлĕшпе сӳрĕк ĕçлеççĕ

Чăваш АССР Совнаркомĕ Етĕрне тата Красноармейски районсем чугун çул валли вутă хатĕрлесе турттармалли плана мĕнле пурнăça кĕртсе пыни çинчен сӳтсе-яврĕ. Совнарком Етĕрне райсовет исполкомĕн председателĕ Спиридонов тата Красноармейски райсовет исполкомĕн председателĕ Александров юлташсем Чăваш АССР Совнаркомĕ 1943 çулхи сентябрĕн 18-мĕшĕнче йышăннă постановление пурнăçа кĕртес ĕç çине ответсăррăн пăхнине палăртрĕ. Çавна пула ĕнтĕ ку районсем чугун çул валли вутă хатĕрлемелли иккĕмĕш çурçулхи плана тултарассине хăрушлăх умне тăратаççĕ. Спиридоновпа Алексеев юлташсем, Совнарком енчен кăтартусем пулнă пулин те, чугун çул валли вутă хатĕрлеме ĕç вăйĕ мобилизацилес тĕлĕшпе кирлĕ мерăсем йышăнман. Хĕрлĕ Чутайри механизациленĕ вăрманпункчĕн начальникĕ Феклистов юлташ çуран тата лашапа ĕçлекенсемпе усă курасси çине çителĕксĕр çаварăнса пăхать. Çавăнпа ĕнтĕ вутă хатĕрленĕ тата турттарнă çĕрте ĕç сӳрĕк пырать.

Чăваш АССР Совнаркомĕ Етĕрне тата Красноармейски райсовет исполкомĕсен председателĕсене Спиридоновпа Александров юлташсене вăрманта ĕçлеме çынсем тата турттăм вăйĕ вăхăтра мобилизацилеменшĕн, мобилизациленĕ çынсене вăрмана ярассине организацилеменшĕн ятласа хăварчĕ. Мобилизациленĕ çынсене декабрĕн 15-мĕшĕччен пĕтĕмпех ĕçе вырнаçтарса тухмасан, чугун çул валли вутă хатĕрлемелли иккĕмĕш çурçулхи плана тултармасан, вĕсене татах та çирĕпрех ответ тыттармалла пуласси çинчен асăрхаттарчĕ.

Хĕрлĕ Чутайри механизациленĕ вăрман пункчĕн начальникне Феклистов юлташа вăрман пунктĕнчи пĕтĕм инженерла-техникла работниксемпе мастерсене вăрмана пынă çынсен ĕçне организациленĕ çĕре мобилизацилеме тата ĕçлекенсене лайăх условисем туса парса, кулленхи нормăна кашни рабочи тата вăрман турттаракан пурнăça кĕртмелле тума хушнă.

Чăваш АССР Вăрман промышленность халăх комиссарне Дубов юлташа, вăрмансем ӳлартса ӳстерес тĕлĕшпе ĕçлекен управленин начальникне Яковлев юлташа, Чăвашснаблес управляющине Хохлов юлташа тата вăрман хатĕрлекен предприятисен директорĕсене вăрмана ĕçлеме пыракансене санитари тĕлĕшĕнчен тĕрĕсленĕ хыççăн çеç общежитисене вырнаçтарма хушнă. Чăваш АССР сывлăх халăх комиссариачĕн вăрман хатĕрлев организацийĕсенчи рабочисен общежитисенче санитари йĕркисене мĕнле тытса пынине тăташах тĕрĕслесе тăмалла.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Коммунистсен активлăхĕ ӳсет

ШĂХАСАН. Матьшӳри «Молодой колхозник» колхозри пуçламăш парторганизаци юлашки вăхăтра хăйĕн ĕçне тĕпренех лайăхлатрĕ. Унта пурĕ 7 коммунист, вĕсем пурте парторганизаци ĕçне активлăн хутшăнаççĕ.

Туллимар вăтам шкул директорĕ коммунистка П. Григорьева юлташ колхозри агитколлектива ертсе пырать. Вăл агитаторсемпе тăташах семинарсем ирттерет, пĕтĕм ĕçе план тăрăх туса пырать. Агитколлектив членĕсем кăçал колхозниксем хушшинче калаçусемпе докладсем 34 хутчен ирттернĕ, 127 хутчен хаçатсем вуласа панă.

Коммунистсем колхоза нумай пулăшаççĕ. Кăçал колхоз ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлерĕ, государство умĕнчи парăмсене вăхăтра татрĕ. Халĕ колхозра çуракине хатĕрленес ĕç хĕрӳллĕн пырать. Тислĕк кăлараççĕ, вăрлăхсене сортлаççĕ. Транспорт инвентарĕсемпе кӳлмелли хатĕрсене юсама уйрăм бригада организацилерĕç. Коммунистсем пуçарнипе колхозра агрокружок ĕçлеме тытăнчĕ. Ăна колхозри агротехник В. Игнатьев ертсе пырать.

Коммунистсем хăйсен политикăллă пĕлĕвĕсене ӳстерес тĕлĕшпе те тимлĕн ĕçлеççĕ. Кашни эрнерех Сталин юлташăн «Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен» çырнă кĕнекине вĕренес тĕлĕшпе заняти пулса иртет. Кружока парти членĕ П. Макаров юлташ ертсе пырать. Кăçал пурĕ 8 заняти ирттернĕ.

Парторганизацинче пухусем йĕркеллĕ иртеççĕ. Парторганизацин йышĕ те ӳссех пырать. Халĕ ВКП(б) членĕн кандидатне кĕме 3 колхозник хатĕрленеççĕ

В. ВЕСЕЛОВ.

Ялти актив Сталин юлташăн кĕнекине вĕренет

ВĂРНАР. Хапăсри пуçламăш парторганизаци Сталин юлташăн «Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен» ятлă кĕнекине вĕренме кружок организациленĕ. Кружока шкул директорĕ ВКП(б) членĕн кандидачĕ А. Анисимов юлташ ертсе пырать. Унта ялти активистсем пурĕ 30 çын вĕренеççĕ

Кружокра занятисем йĕркеллĕ иртеççĕ. Юлашки занятире Сталин юлташ Октябрьти социализмлă аслă революци пулнăранпа 26 çул тултарни çинчен тунă доклада вĕреннĕ. Кружокра вĕренекенсем çакăн хыççăн Сталин юлташ докладне колхозниксемпе колхозницăсене ăнлантарса параççĕ.

В. КИРИЛЛОВ.

Çуракине большевикла хатĕрленер!

Гектартан 100-шер пăт тырă тӳса илессишĕн

ЕТĔРНЕ. Колхозсенче çитес çул кашни гектартан 100 пăтран кая мар тĕштырă туса илессишĕн кĕрешӳ сарăлса кайрĕ. Колхозниксем кашни гектар лаптăк çине 90-шар лав тислĕк тăкма (пĕлтĕрхинчен икĕ хут ытларах), 20-шер тонна торф кăларма, 7—8 центнер кĕл пухса сапма, çителĕклĕ таран кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухма, юр тытса юлма пулчĕç.

«Родина», «Парижская Коммуна», «XI лет Октября» тата ытти колхозсем акмалли вăрлăхсене пĕтĕмĕшпех тасатса триерсемпе сортланă, плугсемпе сеялкăсене юсама тытăннă. Ленин тата Ворошилов ячĕсемпе тăракан колхозсенче юр тытса хăварма хире щитсем кăларса лартнă. Пур колхозсенче те хире тислĕк турттараççĕ. «Пионер» колхозри колхозниксем уя 1500 лав тислĕк кăларнă.

Çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе комсомолецсемпе шкул ачисем те хастарлăн ĕçлеççĕ. Киров ячĕпе тăракан тата «Красный пахарь» колхозсенче çамрăксем вăрлăх сортлаççĕ, вăкăрсемпе сĕт сахал паракан ĕнесене ĕçе кӳлме вĕрентеççĕ, тислĕк тата вырăнти удобренисем пухаççĕ.

Кунти çамрăксем Вăрнар районĕнчи ялхуçалăхĕнче малта пыракан комсомолецсемпе çамрăксен чĕнĕвне сӳтсе-явнă хыççăн кашни гектартан 100-шер пăт тырă туса илессишĕн пыракан кĕрешĕве уйрăмах активлăн хутшăнма пуçларĕç. Етĕрнекассинчи вăтам шкулта вĕренекенсем колхоза 25 центнер вăрлăх сортласа пама, кашни вĕренекен 5-шер пăт кĕл, 4-шар килограмм кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса пама, хăйсен вăйĕпе 55 гектар çинче юр тытса хăварма, учительсем колхозниксене агротехникăна вĕрентме обязательствăсем илнĕ. Халĕ вĕсем çак обязательствăна чыслăн пурнăçласа пыраççĕ.

Н. ЦВЕТКОВ.

Çак колхозсем пек ĕçлемелле

ЕЛЧĔК. Районри колхозсем хĕрсех çуракине хатĕрленме тытăнчĕç. «Марс» колхоз акмалли вăрлăхсене декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне йăлтах сортласа хучĕ. Пурĕ 950 центнер вăрлăх сортланă. Ялхуçалăх машинисенчен 23 плуг, 4 сеялка, 32 сӳре тата 9 культиватор юсанă. Çуракинче кирлĕ пулакан лаша хатĕрĕсене 40 комплект юсаса хунă. Хире кашни кунах тислĕк кăлараççĕ. Ку ĕçре кулленех 4 лаша ĕçлет.

Шăмалакри «Вторая пятилетка» колхозра та çуракине начар мар хатĕрленеççĕ. Кунта 650 центнер вăрлăх сортласа хунă. Колхоз тимĕрçи С. Курняков ялхуçалăх машинисене кĕске срокра юсаса çитерессишĕн тăрăшса ĕçлет. Вăл 18 плуг, 6 сеялка юсарĕ. Лаш-Таяпари Крупская ячĕпе тăракан колхозăн вăрлăх сортлакан звени 225 центнер тулă, 25 центнер кантăр вăрри сортласа хунă. Халь ку звено сĕлĕ вăрлăхне кĕске срокра сортласа пĕтерме тăрăшать. Хире кашни кунах 6 лавпа тислĕк турттараççĕ. Пĕтĕмпе 600 лав тислĕк кăларнă. Ялхуçалăх машинисенчен 15 плуг юсанă.

«Красный Восток» колхоз членĕсем те çитес çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешеççĕ. Акма кирлĕ вăрлăхсене 100 процентчĕпех сортласа хунă. Лаша кӳлмелли хатĕрсене юсаса çитерчĕ. Ку ĕçре 73 çулхи колхозник Е. Ермеев тăрăшса ĕçлет.

Каваларти «Комбайн» колхозра вăрлăхсене сортлас тĕлĕшпе 8 çынтан тунă уйрăм звено ĕçлет. Çак звено 285 центнер вăрлăх сортланă. Колхоз 15 плуг, 2 сеялка юсаса хунă. Хире кашни кунах 8 лавпа тислĕк турттараççĕ. Пĕтĕмпе халĕ 620 лав тислĕк кăларнă.

И. ПЕТРОВ.

Йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвне хатĕрленеççĕ

КӲКЕÇ. Районри çамрăксемпе шкул ачисем колхоз çамрăкĕсен Пĕтĕм Союзри йĕлтĕрлĕ ăмăртăвне хатĕрленме тытăнчĕç. Ялсенче халăха йĕлтĕрпе çӳреме вĕрентес тĕлĕшпе кăçал 84 инструктор-общественник хатĕрлеме палăртнă. Халĕ 12 инструктор вĕрентсе хатĕрленĕ ĕнтĕ. Кунсăр пуçне вулав çуртчĕсем çумĕнче йĕлтĕрпе çӳреме вĕренмелли кружоксем организациленĕ. Çав кружоксем урлă 20 сехетлĕ программăпа 900 йĕлтĕрçĕ, 30 сехетлĕ программăпа 740 йĕлтĕрçĕ хатĕрлеççĕ. Йĕлтĕр базисене паянхи куна пĕтĕмпе 1.200 мăшăр йĕлтĕр пур.

Ăмăртăва 262 команда хутшăнать

КАЛИНИНО, декабрĕн 16-мĕшĕ. (Телефонпа). Эпир колхоз çамрăкĕсен Пĕтĕм Союзри йĕлтĕрлĕ ăмăртăвне хатĕрленес тĕлĕшпе ĕçе ертсе пыма районра оргкомитет турăмăр. Ăмăртăва 262 команда хутшăнать. Районе 1.215 мăшăр йĕлтĕр пур, вăл шутран 500 мăшăрĕ—килте тунисем, 17 çĕрте йĕлтĕр базисем тунă. Халĕ йĕлтĕрçĕсен командисем кашни кунах хăнăхмалли занятисем ирттереççĕ.

Смотра хатĕрленет

ШĂХАСАН. (Хамăр корр.). Район центрĕнче пĕлтĕрех художествăллă пултарулăх кружокĕ организациленĕ. Унта Шăхасанти вăтам шкулта вĕрентекенсемпе районри учрежденисенче ĕçлекен хĕрарăмсем тăраççĕ. Ăна культработница М. Е. Шулгина юлташ ертсе пырать. Çак кружок çулталăк хушшинче 32 юрă юрлама тата ташăсем чылай вĕреннĕ. Ĕççыннисем умĕнче 14 хутчен хăйсен пултарулăхĕсене кăтартнă. Кăçал вĕсем Атнашра, Ямашра, Сителте тата ытти çĕрте те пулнă. Итлекенсем вĕсене пур çĕрте те ырланă.

Халь кружок хĕрсех художествăллă пултарулăх смотрне хатĕрленет. Çавна май кунта çĕнĕрен юрăсемпе ташăсем вĕренеççĕ. «Песня о Сталине», «Священная война», «Песня о присяге», «Песня артиллеристов» тата ытти юрăсене те вĕреннĕ. Смотрта кăтартма пĕчĕк инсценировкăсем те хатĕрлеççĕ.

Ст. АСЛАН.

Ют çĕршывсенче

СОВЕТ СОЮЗĔПЕ ЧЕХОСЛОВАКИ ДОГОВОР ТУНИ ÇИНЧЕН ГУБЕРТ РИПКА КАЛАНИ

ЛОНДОН, декабрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Чехословакин Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕн ĕçĕсене туса тăракан Губерт Рипка доктор ĕнер Лондонра çапла каланă:

«Мускавра Совет Союзĕпе Чехословаки тунă пакт халиччен хут çинче çеç пулнă проектсене пĕтерсе лартать. Çав проектсем вĕсем тĕрлĕ федерацисем тата вăтам зонăсем тума палăртнă пулнă. Вĕсенчен паянхи туссемпе тăшмансем, конференцире çавракан сĕтел тавра ларса, перопа пĕрре çырсах малашне хăйне уйрăм санитари кордонĕ туса хума пултарнă. Мускаври договор хăватлă Совет Российыйпе Европа варринчи ытти государствăсем хушшинче союз тумашкăн пĕрремĕш хут лайăх никĕс туса пачĕ.

Хĕвеланăçĕнчи çĕршывсем: большевиксен революцийĕ Российăна Европа çемьине тавăрăнма кансĕрлет, тесе шутланă. Чехословакия ун пек шутламан. Йăлтах урăхла, вăл ăна Европа прогресĕн пуçĕнче пыракан Российăна Европăри государствăсемпе пĕрле килĕштерсе ĕçлемешкĕн аслă историллĕ май паракан революци тесе шутланă. Профессор Томаш Масарик 1917-мĕш çулта Вильсон президента янă меморандумра Российăра питĕ пысăк улшăну пулнине тĕрĕс палăртса панă. Вăл çапла çырнă: «Большевиксем власть пуçĕнче вĕсен тăшманĕсем шутланинчен нумайтарах вăхăт тăрĕç... Хĕвелтухăçĕнчи мĕнпур пĕчĕк государствăсемшĕн вăйлă Россия пурри кирлĕ, мĕншĕн тесен вĕсем унсăрăн нимĕçсен аллине кĕрсе ӳкме пултараççĕ», тенĕ. Çакă вăл Чехословакин тулашри политикин тĕп принципĕ пулса тăнă. Эпир çакна ĕненсе тăнă: Хĕвелтухăçĕнче Германин малашне пулас кирек мĕнле агрессийĕ те путланса лармалла, мĕншĕн тесен Совет Российыи Европа варринчи ытти государствăсемпе союз тăвĕ, тенĕ. Çапла пулассине шанса тăни çак договорта уйрăмах лайăх палăрчĕ.

Договор çумне хушса хунă протоколта икĕ государство та хăйсен кӳршисемпе, çавăн пек договор тума кăмăллаканнисемпе, çавăн пек договорсем тăвасси çинчен калаçасшăн пулнине палăртса панă. Польша çавăн пек тăвас тет пулсан, виççĕ государство пактне тума çул уçăлать. Чехословаки халăхĕ Российăпа тӳрех союз тума тахçантанпах тăрăшнине çав пакт пурнăçа кĕртрĕ. Вăл пангерманизм наступленине малтанах хирĕç тăмалли тĕп инструмент çеç пулса тăмасть, вăл тата пĕтĕм Европăра мирпе хăрушсăрлăх туса хума пулăшакан япала пулса тăрать».

ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ШТАТСЕН ГОСУДАРСТВЕННĂЙ ДЕПАРТАМЕНЧĔ СОВЕТ СОЮЗĔПЕ ЧЕХОСЛОВАКИ ДОГОВОРĔ ÇИНЧЕН КАЛАНИ

ВАШИНГТОН, декабрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Совет Союзĕпе Чехословакин договорĕ çинчен США-н государственнăй департаменчĕ çапла каланă:

«Совет Союзĕпе Чехословаки правительствисем пĕр-пĕрне пулăшасси çинчен тунă договора темиçе уйăх хушши сӳтсе-явнă. Çав договор Англипе Совет Союзĕ 1942-мĕш çулта тунă договор евĕрлĕрех. Вăл коллективлă хăрушсăрлăх системине хирĕç пымасть пуль, тесе шутлаççĕ».

АМЕРИКА ХАÇАЧĔСЕМ СОВЕТ СОЮЗĔПЕ ЧЕХОСЛОВАКИ ДОГОВОРĔ ÇИНЧЕН

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 14-мĕшĕ. Совет Союзĕпе Чехословаки Республики договор туни çинчен Мускавран пĕлтернисене Америка хаçачĕсем курăнмалла вырăнта пичетлеççĕ.

«ПМ» хаçат договор çинчен çырнă статьяра çапла калать: Совет Союзĕпе Чехословаки Республики договор туни «Лондонра эмиграцире пурăнакан правительствăсене, эпир Совет Союзне хирĕç вăйлă блок тăвасшăн тесе калакансене» питĕ вăйлăн пырса çапать. «Совет политики, — тесе çырать хаçат, — малашне Совет Союзне кам та пулин таланассинчен хăтармашкăн Европăри мĕнпур демократиллĕ çĕршывсемпе договор тăвасси пулса тăрать», тет.

«Нью-Йорк пост» хаçатăн политикăллă ĕçсем çинчен çыракан сотрудникĕ Доротти Томпсон çапла калать: Совет Союзне хирĕç санитари кордонĕ тума шутлакансене çак договор тататăклăн пырса çапать. Вырăссем çĕнтерессине Бенеш малтанах ĕненсе тăнă, вăл Лондонри эмиграцире пурăнакан ытти правительствăсен представителĕсене те Совет Союзĕпе килĕшме чĕннĕ, тет. (ТАСС).

Ответлă редакторăн заместителĕ **А. А. ЭСХЕЛЬ.**

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0— 67, секретарьпе заместителĕн — 4— 26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 1171 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59×42 п. л. Тираж 14.400 экз.